# Александр Спиридонович Артемьев



**Материала Муркаш районĕнчи А.Г.Николаев ячĕллĕ Калайкасси вăтам шкулĕнче ĕçлекен А.М. Степанов хатĕрленĕ**

**1924-1998**



**Эп пултăм таçти çĕр-шывра та,**

**Çитмен çĕр ниçта хăварман.**

**Çуралнă çĕр-шывăм, нихçан та**

**Каймарăн эс ман асăмран**

*А. Артемьев*

# Кун-çулĕпе ĕçĕ-хĕлĕ

**прозăçă, сăвăç, литература критикĕ, тăлмач.**



1924 çулта Элĕк районĕнчи Тури Выл ялĕнче хресчен çемйинче çуралнă. Хĕрлĕ Чутай районĕнчи Штанашри вăтам шкулта, А. М. Вун сакăр çул тултараспа вăл Хĕрлĕ Çара каять, 1943 çулта Курск патĕнчи çапăçура аманать. Госпитальре сывалать те — каллех Хĕвел анăç фронтне. Германие парăнтарнă хыççăн Хĕвел тухăçне те çитме тивет ăна, Маньчжурире вăл Япони çарĕсемпе çапăçăва кĕрет. Пулас çыравçă 1947 çулта тин киле таврăнать.
Тăван ялĕнчи вулав пӳрчĕн заведующийĕнче вăй хунă, Горький ячĕпе хисепленсе тăракан Литература институчĕнче вĕреннĕ.
«Ялав» журналăн литература ĕçченĕ, «Тăван Атăл» журналăн редакцийĕн яваплă секретарĕ пулса ĕçленĕ.



1947 çул.

Пĕрремĕш калав – «Пĕчĕк Лийăн пысăк савăнăçĕ»

1950 çул.

Пĕрремĕш кĕнеке - «Ан авăн, шĕшкĕ»

«Хĕрлĕ çăлтăр» (1952), «Юрату юррисем» (1953), «Салампи» (1956), «Алтăр çăлтăр» (1958), «Çунатлă çуралнисем» (1965), «Хунавлах хăрнисем» (1970), «Симĕс ылтăн» (1972), «Тăвăл умĕн (1975) т. ыт.те




«Саламби» повеçре автор чăваш çамрăкĕсен вăрçă хыççăнхи нушаллă пурнăçне, вĕсен кăмăлне, çутă ĕмĕтне сăнарланă.

В. Н. Яковлев режиссер «Саламби» повесть тăрăх пьеса çырса К.В.Иванов ячĕллĕ Чăваш академи драма театрĕнче лартнă.





Анисим Асламас композитор ун тăрăх «Саламби» ятлă опера çырнă.

**А.Артемьев – поэт-юрăç**

Пултарулăхăн малтанхи çулĕсенче сăвăсем çырнă. Композиторсем унăн сăввисемпе юрăсем хывнă: «Ах, пĕлесчĕ», «Çуралнă çĕр-шыв», «Салампи юрри» тата ыт.

**А. Артемьев - литература критикĕ**

«Пурнăç чăнлăхĕпе писатель ăсталăхĕ»

**А. Артемьев – куçаруçă**

А. Пушкин, М. Лермонтов, И. Тургенев, Л. Толстой, И. Гёте тата ыт.те.